### «Пушаннӑ килӗм-ҫуртӑм…»

Пушаннӑ килӗм-ҫуртӑм,
каҫарсам, каҫар,
сана кая юлса асилтӗм пулӗ.
Халь каччӑ мар эп ӗнтӗ, –
кукшаланнӑ ар,
Пӗр ҫакӑнта ман кӑмӑлӑм йӑлт тулӗ.

Сӑваплӑ пӳртӗмпе асамлӑ вырӑнсем:
кунта тӑванӑмсен тухайнӑ чунӗ,
кунти тавралӑхра ҫӳреҫҫӗ пуль вӗсем.
Ҫитсессӗн вӑхӑт ывӑлне те чӗнӗҫ.

Пурнасчӗ-ха татах та,
саншӑнах, аннем.
Ху ватлӑхна кӗричченех куҫ хупрӑн,
леш тӗнчере кӑна, тен,
канӑҫ тупрӑн.
Ман саншӑн та пурнасчӗ,
пурнасах теем.

Кунта мунча ларатчӗ.
Пӗр ирпе унта
Турри тӑвансене ҫӗн кайӑк панӑ,
тем сӑлтавпа ҫав ачанне вӑл ҫакӑнтах
ури ҫине лартайнӑ пысӑк паллӑ.

Лапки пулманччӗ те ытла ҫӳллех,
унтан ӳксен ураҫӑм мӑкӑлтаннӑ.
Ларасчӗ тӗк тесе вӑрҫап хама каллех.
Мана, тен, Турӑ чӑн та сакӑлтанӑ?
Элкер ентешӗме, унтан Хусанкая
чылай малтан туя тыттарнӑ Турӑ.
Чӑвашлӑх хирӗнче юлассӑм ҫук кая,
ҫырса курманччӗ-ха хальччен халтура.

Састашӗ ӑнӑҫсӑр. Ыйтатӑп каҫарма.
Тӗпчевҫӗ эп. Хама поэт теместӗп.
Ман ял Упакасси те мар, – Хураҫырма,
ҫапла пулнишӗн пӗртте ӳкӗнместӗп.
Кушлавӑш уйӗ, ирӗклӗ хусах кати,
Элкер Чакки тупайнӑ хӳтлӗх енӗ...
Кунта ҫеҫ канлӗхӗм, чунри киленӗҫ –
ҫак чӑнлӑха ӑнлантӑм халӗ тин.

Тымарăм, сĕткенне юна куçар,
унпа кăна ман кĕлеткеçĕм тулĕ...
Пушаннă килĕм-çуртăм, каçарсам, каçар,
сана кая юлса асилтĕм пулĕ.

*2007*

*Эртиван, С. «Пушаннă килĕм-çуртăм…» : [сăвă] С. Эртиван // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 496.*